# СĂВАПЛĂ ПАВЕЛ АПОСТОЛ ФИЛИМОН ПАТНЕ ЯНĂ ÇЫРУ

## 1-мĕш сыпăк

*Саламлани*

1 Чунăма Иисус Христос тыткăнланă Павелран тата ĕненекен
тăванăмăр Тимофейран – савнă Филимон тусăмăра, ĕçри юлта-
шăмăра; 2 тата савнă тăванăмăр Апфия йăмăка; тата кĕрешӳри
юлташăмăра Архипа; çавăн пекех санăн килӳнте пуçтарăнакан
ĕненекен ушкăна. 3 Сире пурне те Атте Туррăмăртан тата Иисус
Христос Хуçамăртан ырăлăхпа канăçлăх пултăр.

*Филимонăн юратулăхĕпе ĕненĕвĕ*

4 Кĕллĕмсенче сана аса илмессерен эпĕ Туррăма яланах тав тă-
ватăп, 5 мĕншĕн тесен эсĕ Иисус Хуçамăра епле ĕненни çинчен,
ĕненекенсене пурне те юратни çинчен тăтăшах илтетĕп. 6 Пирĕн-
пе пĕрле ĕненсе Иисус Христосри мĕн пур ырăлăха санăн хăвăр
патăртах хастаррăн пĕлмелле пултăрччĕ тетĕп. 7 Санăн юратулăху
пире пысăк савăнăç тата йăпанăç парать. Сана пула, тавах, ĕне-
некенсем те чĕрисенче канăçлăх тупрĕç.

*Онисимшăн тархаслани*

8 Христос ячĕпе манăн сана мĕн тумаллине хăюллăнах хушма
ирĕкĕм пур. 9 Апла пулин те эпĕ санран юратулăхпа ыйтасшăн.
Сана такам йăлăнмасть, эпĕ, ватă Павел, халĕ чунăма Иисус
Христос тыткăнланăскер, ыйтатăп. 10 Эпĕ ĕненӳри ывăлăмшăн,
Онисимшăн, тархаслас тетĕп. Кунта, тĕрмере, эпĕ уншăн чун-чĕм
ашшĕ пулса тăтăм. 11 Ĕлĕкрех сана унран ним усси те пулас çукчĕ,

анчах халĕ вăл иксĕмĕре те кирлĕ. Эпĕ ăна сан патна яратăп.
[12] Эсĕ ăна чĕреçĕм вырăнне хурсах хапăл тусамччĕ*. [13] Ман ăна
ярассăмах килместчĕ. Ырă Хыпар вĕрентнĕшĕн тĕрмере ларнă
чухне вăл сан вырăнна манăн пулăшаканăм пултăрччĕ тесе
шутлаттăм. [14] Анчах та санпа килĕшсе татăлмасăр нимĕн те тă-
вас темерĕм. Ырă ĕçе санăн çын хистенипе мар, кăмăл хушнипе
тумалла пултăрччĕ терĕм. [15] Тен, вăл санран вăхăтлăха уйăрălни
эсĕ ăна ху патна ĕмĕрлĕхе илессе пĕлтерчĕ. [16] Ĕнтĕ тек вăл сан-
шăн чура мар, çывăх çынну, савнă ĕненекен тăвану. Вăл маншăн
хаклă çыннăм пулчĕ, саншăн тата пахарах пулĕ. Эсĕ ăна çынлă-
хĕшĕн çеç мар, Хуçамăр урлă тăван пулнишĕн те килĕштерĕн-ха.

[17] Çапла ĕнтĕ, эсĕ мана тус-юлташ тесе шутлатăн пулсан, ăна
мана йышăннă пекех хапăл ту. [18] Вăл сана мĕнпе те пулин кӳрен-
тернĕ е парăмлă пулсан, вăл мар, эпĕ парăмлă тесе шутла. [19] Çак-
на хам аллăмпа çырсах çирĕплететĕп: ун парăмне хамах парса та-
тăп. Эсĕ ман умра пурăнăçушăн парăмлă пирки эпĕ шарламастăп
та. [20] Ĕнтĕ Хуçа Турă ячĕпе маншăн ырă ĕç тусамччĕ, Хуçамăр
урлă тăван пулса, чунăма лăплантарсамччĕ.

[21] Эсĕ итлессе шанса çыратăп. Эсĕ маншăн ыйтнинчен те ыт-
ларах тума пултарасса пĕлетĕп. [22] Тата ман валли пӳлĕм хатĕрле.
Турă мана, сирĕн кĕллĕре илтсе, сирĕн патăра çавăрса çитерессе
шанатăп.

### *Юлашкинчен салам яни*

[23] Сана Епафрас салам ярать. Христос Иисусшăн вăл манпа
пĕрле тĕрмере ларать. [24] Манăн ĕçри юлташăмсем Марк, Арис-
тарх, Димас тата Лука сана салам калаççĕ. [25] Иисус Христос Ху-
çамăрăн ырăлăхĕ сирĕн чун-чĕмпе пултăр. Аминь.

---

* 1:12 Хăш-пĕр авалхи ал çырусенче ку сăвă урăхларах: «*Эпĕ ăна сан патна хамăн кăмăлăма парса каялла яратăп*».